**Улшăну**

Вăя туйни — пĕчченлĕх вырăнне,

Вут пек стихия!.. Çамрăклăх иртсен

Эп мантăм çавă туртăмăн вăйне,

Пусланчĕ — пушăлăх... Эп çынсенчен

Ыйтма пуçларăм: пулăр манпалан!

Вĕсен хусканăвĕсемпе вĕсен

Аллисене хам таврара ялан

Курса, пушăлăха манас тесе

Эп йăлăнма пуçларăм — «ман валли» —

Хĕм пек шуса иртен алăсене.

Пуçланчĕ — тепĕр пурнăç, — «ахалли».

Çăмăлли мар-мĕн... Манăн тĕнчене

Пуçланчĕ — тепĕр пурнăç, — «ахалли».

Вĕлт çухалан, каллех килен куçсем.

...Куçсем çеç юлччăр!.. Хам эп куç пулам —

Вĕç-хĕрсĕр пысăк куç... Пур шăнăрсем,

Пур туртăну та — йывăр сарăлан

Куçсен тарăнлăхне çеç пĕлтерсе

Ялтраччăр — ятсăр, тĕлсĕр — хăйсене

Хăйсем туймасăр... Çакă çĕр çинче

Пулам эп — тĕс те сасă вăййине

Хамра ялтратакан, мĕн пур тĕнче

Сасне-чӳне хамра янратакан

Тӗнчемӗр тӗлӗнтерӗвӗ кӑна.

Манра ялтраччӑр — ҫеҫенхир тасан
Хӑй сӑррине-тӗсне кана-кана
Ҫитӗнтерсе, хӑватлӑ шӑплӑхра
Тӳпе тӗпне ҫитернӗ шевлесем,
Таҫта, ҫӑл куҫ тӗпӗсенче хура,
Пӑлхавлӑ юшкӑн йывӑр тӗтӗрсе
Ешенчӗклӗн куҫса чӳхеннисем.

...Художник вӑйӗ! Ун шайне ҫитсен
Эс — ҫутҫанталӑк вӑйӗпе пӗр тан.
Пӗртен-пӗр аслӑ ӗҫ ҫеҫ ӗмӗртен
Пӗр чарӑнми, чакми пырать ялан:
Ват Микеланджело чиркӳсенче
Чикмек ҫине тӑрса сӑрлать, сӑрлать,
Каллех Рембрандтӑн чӗркуҫҫи ҫинче —
Юлашки хут — ун Саскийӗ ларать.

1958

*Айхи, Г. Улшӑну : [сӑвӑ] // Айхи, Г. Сӑвӑсемпе поэмӑсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 90-91.*